# Шанчăк

(Çамрăк поэтсен пултарулăхĕ)

> Эпир хытă шанатпăр: çапла пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех, ударенисем çинчен, «кӳртес-кĕртес» сăмахсене мĕнле çырмаллине çыркаласах вăраххăн чăваш Пушкинĕсене, Лермонтовĕсене курăпăр. Вăхăт çитĕ!
>
> Çеçпĕл Мишши.

Ик-виçĕ çул ĕлĕкрех, Мускаври сăмах ăстисем каланă поэзи ытти жанрсенчен вăйлăрах пулнă. Унтанпа чăваш прози самаях ӳсрĕ, тĕреклĕленчĕ, теççĕ. Вăл пĕтĕм Союз арени çине тухасси - паян-ыран пулмалли ĕç, теççĕ. Халлĕхе çапах та калавçăсем сăвăçсене, роман çыракансем поэма çыракансене кая хăварчĕç, теме çук-ха. Тăлмачсем託 каларĕшле - пачах урăхла: вырăсла куçарса пичетленĕ пĕрремĕш роман прозăпа, сăвăпа çырнăскер пулчĕ.

Эпир кунта пĕрне хурласа тепĕрне ырласшăн мар. Ухсайпа Уярăн, Алгапа Турханăн, Уйăппа Илпекĕн нимĕншĕн те тытăçса ӳкмелли çук пулĕ тетпĕр. Кашни хăйĕн ĕçне тăвать. Пурте пĕрле - халиччен пулман пысăк, йы-вăр, хисеплĕ те кăмăллă ĕçе - чăваш литературин ĕçне тăваççĕ. Чăн ĕнтĕ, пирĕн «пур енĕпе» те пултаракансем те тухкалаççĕ: ун йышши халăх вара сăввине те сăвăлать, калать, камитне те кăтартать, тишкĕрме те тиркемест. Ăçта пушă вырăн пур - вăл çавна «тултармах» тăрăшать. Мĕн тата, епле тултарса лартни тепĕр чух никамах та интереслентермест. Авторăн интересĕ те гонорарне илсенех сӳнсе ларать. Унашкал ялан хатĕр, пурне те ăста «универсалсем» нимĕнле критери çук çĕрте çеç кун курма пултараççĕ.

Чăваш литературинче çав критери çителĕклĕ тесе калама халичченех май килмест-ха. Вăйлă традициллĕ пысăк литературăсем, пуринчен ытла, вырăс литератури, пирĕншĕн пример пулса тăмалла. Çав тӳперен пăхсан, пирĕн хăшпĕр нумай тухăçлă сăмах арманĕсем авăрни - вĕренчĕкле хăтланнă çыркаланчăк пек çеç туйăнать. Вырăсла çыракан вăтам кăна писатель те час-часах пирĕн ятлă-сумлă авторсенех вăтантарма пултарать. Хăйсен ăсталăхне ӳстерме тăрăшман, хăйсене хăйсем пулса çитнĕ художник тесе шутлакан ăслă пуçсем çавăн пек чухне кӳренсе те илеççĕ, чăркăшма та пăхаçĕ. Унашкал вушар чĕресене ӳкĕте кĕртме йывăр. Пирĕн шанчăк - çамрăксем. Сăмахăмăр çавсем çинчен.

* * *

Поэзи...

Томĕ-томĕпе проза çырса чапа тухнă писательсем те - çĕртен тăхăрвун тăххăрăшĕ - пĕрер сăвă та пулин çырнах ĕнтĕ. «Яш чух пачах сăвă çырман çын вăл темле катăкрах туйăнать, аномали евĕрлĕ» тенеччĕ пире пĕр педагог. Пĕр пĕлĕш поэт çапла каларĕ: «Вуниккĕре-вунвиççĕре чухне эпĕ хам сăвă çырни çинчен чылаях интеллигентлă мăнаккана вăрттăн пĕлтертĕм. Вăл ман çине чăр пăхса илчĕ те - «ан хăра, ачам, иртсе кайĕ-ха» терĕ.

Нумайăшĕн, чăнах та, иртет çав «ача-пăча йăли». Анчах пинтен пĕринне тенĕ пек çав йăлана савăл çапса та кăларайmастăн. Нимĕнле чăрмав та, нимĕнле инкек-синкек те çырма пăрахтараймасть çав тӳрккесе. Çавăн пек этем кăна поэт пулса кĕрет хăй халăхĕн кун-çулне. Ĕмĕрех сăвă çыракан тепĕр йышши çынсем те пур. Вĕсем поэзин элементарлă правилисене те пĕлмеççĕ, пĕлесшЁн те мар. Шухăша вĕри туйăмпа ăшăтни те çук вĕсен. - Кассан турпас пулмасть-и, çырсан сăвă пулмасть-и? - тенĕ пек аппаланаççĕ. Сăмах ăçталла сĕтĕрет -

çавӑнталла сулӑнаççӗ. Хутран-ситрен вӗсем çемçерех кӑмӑллӑ редакторсене юрама та меслет тупаççӗ. Ӗлӗк ялтан яла çурла шӑлласа çӳрекен тимӗрçӗсем пурччӗ. Пирӗн таврара вӗсене «сивӗ тимӗрçӗсем» тетчӗç. Асӑннӑ категори пире яланах çав «сивӗ тимӗрçӗсене» аса илтерет. Урӑхла каласан, вӗсем пурне-çукне пӑхмасӑрах ӗрчекен графоман таврашӗн йышлӑ ӑрӑвне кӗреççӗ.

Сӑвӑ - романтизм ялавӗ, тенӗ Александр Блок. Революцилле романтизмӑн ялавӗ, тейӗпӗр эпир. Граждан вӑрçи вӑхӑтӗнче Демьян Беднӑйӑн сӑвви-юррисемпе Маяковскийӗн маршла-командӑлла йыхравлӑ йӗркисем мӗнле вӑйлӑ хӗçпӑшал пулнине пурте пӗлеççӗ. Тӑхтин сарӑ хут çине пичетленнӗ «Колчак» поэми, чӑваш ялне çитсе, «тӗрӗс-тӗкел» тӗнчене савӑл çапсах икке уйӑрса кӑтартнине халичченех астӑватпӑр. Харампырсене сӑнӑ вӗçне тирекен вичкӗн чӗлхеллӗ сӑвӑç ун чухне выртан каска пек мӑкланнӑ пайтах ӑса-тӑна якатса çивӗчлетнӗ.

Сӑвӑпа музыка - уйрӑлми йӗкӗреш. Сӑвӑсӑр юрӑ çук. Проза инçетрен перекен шултра етреллӗ тупӑ пек птулсан, сӑвӑ вӑл - ура çинех таптаса пыракан юланут. Прозӑна сехечӗ-сехечӗпе меллӗн килте ларса е талӑкӗ-талӑкӗпе каютӑра-купере çул тытса, кана-кана, «пуç тавра» шухӑшласа вулатӑн пулсан, сӑвва, ӑш хыпнӑ çын çӑл шывне выртса ӗçнӗ пек, каçса кайса вуласа тухатӑн. Каллех калатпӑр: пӗрне те тиркеместпӗр, пӗринчен те пистересшӗн мар эпир. Анчах кашни жанрӑн хӑйӗн уйрӑмӗ пур. Проза сюжетпа, пурнӑç анлӑхӗпе, шухӑшпа çын кӑмӑлне çавӑрать, поэзийӗн (лирикӑллӑ поэзин) ытарайми енӗ - сӑнлӑх, шалти туйӑм, уйрӑм пахалӑхӗ - сӑмахсем кӗвӗллӗ янӑрани. Чӑваш поэзийӗнче нумай вӑхӑт хушши пынӑ тавлашура Çеçпӗлӗн силлабо-тоникӑлла шкулӗ çӗнтерчех. Эпир вуланӑ авторсем пурте пекех çав йӗркепе çыраççӗ. Ку пире савӑнтарать. Чӑваш чӗлхине тӗпчевçӗсем тӗрӗк чӗлхисен йышне кӗртеççӗ пулин те, авалтан вырӑссемпе юнашар пурӑнса, эпир çав халӑх калаçӑвӗн манерӗсене (ударенине, интонацине)

йышăнмасăр тăма пултарайман. Çеçпĕлле сăвă йĕркине пула, пирĕн хальхи поэтсем тĕнчери мĕнпур халăх поэзийĕн шедеврĕсене хăйсен виçипех куçарма пултараççĕ. Вырăс классикĕсемсĕр пуçне, çитес çулсенче пирĕн шутпа Гомер позмисене, Дантене, Руставелине, Низамипе Навои çырнисене, Лонгфеллăн «Гаяваттипе» карелфинсен «Калевалине» пĕтĕмĕшпех куçарса кăлармалла. Эпир халăх культури çинчен калаçатпăр, чăваш чĕлхи литературăпа наука, фклософи чĕлхи пулчĕ, тетпĕр, анчах пур халăхсен культурине те хамăрăн тумасăр малалла ÿсме пултараймастпăр. Унсăрăн пирĕн калаçусем деклараци çеç пулса юлĕç.

Чăваш поэзийĕшĕн çĕнĕ япала - пирĕн хула лирики аталанса пырать. Студент, чулçă, монтер, экскаватор. транспортер, Иванов палăкĕ, нумай хутлă çуртсем... Темĕн çинчен те çыраççĕ çамрăксем. Кунта пирĕн традици пуянах мар-ха. Çур ĕмĕр ытла ял çинчен сăвăланă поэтсем пире хулана, хула çыннин кăмăлне чăваш чĕлхипе çавăрса илме вĕрентеймерĕç. Çул-йĕре çĕнĕрен хывма тивет.

Мĕн çинчен çыраççĕ-ха çамрăксем**?** Тăван çĕршыв, партипе комсомол, коммунизм стройкисем, халăхсен туслăхĕ, çĕнелсе улшăнсах пыракан чăваш çĕрĕ, чăваш йăлисем, кил-çурт тирпейĕ, ÿсекен Шупашкар çинчен... Кашни çитĕнекен ăрăва расна, çĕнĕлле курăнакан çутçанталăк, кун-çул пуçламăшĕнчи вĕри тунсăх, шухăш-ĕмĕт, юрату... Пурте саккунлă, йĕркеллĕ, вырăнлă.

Мĕнле çыраççĕ çамрăксем? Çавна тинкеререх пахăпăр.

Пирĕн умра çавă та çавă, тесе пуçлаççĕ кун пек чух. Эпир те иртнĕ икĕ çул хушшинче тухнă «Ялавпа» «Тăван Атăл» номерĕсене уммах сарса хутăмăр. Çулне те, уйăхне те, хăш номерне те кăтартса тăмăпăр: статистика отчĕчĕ тумастпăр. Интересленекенсем тупса вулĕç.

Акă Михаил Львовăн «Ырă кăмăл» ятлă сăввинчи тăвата йĕрке:

Килет-и шуҫăм ял ҫине,
Вылять-и каҫхи ҫиҫĕм -
Ялан тухать-ҫке куҫ умне
Асран кайми савниҫĕм!

Аван каланă. Ҫамрăк ҫын таса чĕрепе тунсăхлани сисĕнет, кăшт ассăн сывлани те илтĕнет. (Юрату унсăр пулма пултараймасть.) Сăмах майлашăвĕ тĕрĕс, кулленкунхи калаҫу пекех, ҫапах та ҫĕнĕлле тавҫăрса илетĕн ҫав ĕмĕрхи туйăма. Кăшкăру палли лартмалла та пулман. Йĕркисем шухăша янипе лайăх. Вĕсем, лăпкăн янăрасан та, кăмăла шалти вăйĕпе ҫавăраҫҫĕ. Ҫав сăвăрах авторăн хăйĕн мар сăнлăхĕсем те пур: «чӳречерен шаккан сирень турачĕ» вырăс сăввисенчен кĕнĕ; «савнин хитре чечек пек сăн-сăпачĕ» е «савнин илемлĕ сăн-пичĕ» тенисем поэзишĕн пулсан, нимĕн те пĕлтермеҫҫĕ. Чăн ĕнтĕ, Н. И. Ашмарин илем сăмаха «чăваш чĕлхинчи чи хитре сăмахсен-чен пĕри» тет. Ҫапах та поэтсен унпа хăй тĕллĕнех ҫырлахма кирлĕ мар. Халăх юрринче «илемлĕ хĕрсем чечек евĕрлĕ» тенине пурте илтнĕ. Чăн-чăн халăх поэчĕ Константин Иванов ҫав танлаштарăва хăй майлă ҫавăрса каланă:

Пичĕ-куҫĕ пит хӳхĕм -
Хирти сарă чечек пек.

Малтанхи йĕркери ăнăҫлă та виҫеллĕ аллитераци пирки каламасăрах, пурте куҫăн курса тăран *сарă* ҫумне *хирти* хушни ҫав сăнлăха пĕр поэтăн - Ивановăн ҫеҫ - туса хурать.

Мĕнле тĕрĕс танлаштару! Нарспи таҫта керменте ачашласа ӳстернĕ пике мар. Вăл - «ҫичĕ тарçă-тĕрçĕллĕ» Михетер килĕнче те ĕҫлеме

хăнăхнăскер, «ĕçре хытнă алăллă» Сетнере юратаканскер - садри мар, шăпах та *хирти* чечек, çутçанталăк хĕрĕ.

Юрĕ. Юрату пултăр. Анчах, композици енчен пăхсан, М. Львов сăввин пуçламăшĕ те, варри те, пĕтмĕшĕ те çук. Ăна кирек хăш йĕркинчен тытăнса та вулама пулать. Сюжетсăр-шăнăрсăр япала. Юрату сисĕм-туйăмне юриех, калăпăр, чĕре таппине сăнласа паракан (кардиограмма) ӳкерекен аппарат евĕрлĕ хатĕрпе ӳкерсе илме май пулсан, мĕн чухлĕ кукăр-макăр курмăттăмăр-ши эпир унта! Хавхалану, хĕпĕртӳ, кӳлешӳ, вĕчĕхӳ, иккĕленӳ, ĕненӳ...

Пирĕн çамрăк поэтсен (вĕсен çеç-ши?!) тĕнчи ытла та тикĕс. Паллах, вĕсем пурнăçне те нумаях пурăнмăн-ха. Вĕсем юратăва куллен-кунах вĕренӳпе, пархатарлă ĕмĕчĕсемпе «çыхăнтарма» тăрашаççĕ. Çапах та пĕр енчен «конфликтсăрлăх теорийĕ», тепĕр енчен авторсен эстетикăпа илемлĕх туйăмĕ çителĕксĕрри лирикăна та тăлласа лартни питĕ лайăх палăрать пирĕн поэзире.

Çав тĕлĕшрен А. Артемьевăн «Юрă» ятлă сăввине илсе пăхар.

Сăн хитришĕн çынна ан юрат,
Пит чипер ку тесе ан ырла;
Çутă сăншăн савмашкăн юрать,
Ялкăшсан вăл сӳнми çăлтăрла.

Çӳç кăтришĕн çынна ан юрат:
Çурхи савăк, чечен вăхăтра
Сар чечек те пулма пултарать
Сар пике пек хитре те кăтра,

Сăншăн мар, чун-чĕришĕн çынна,
Хастарришĕн савмашкăн юрать.

Çавăнпа, тусăм, эс те мана
Эп юратна пек ăшшăн юрат.

Чи малтан - автор хăйне хăех хирĕçлени тинкерсе пăхмасăрах курăнать: «сăн хитришĕн... ан юрат, çута сăншăн савмашкăн юрать». Унтан каллех: «сăншăн мар. чун-чĕришĕн...» *Çутă сăн* тесе çыннăн шалти сăнарне, шухăш-кăмăлне каласшăн пулнă пулĕ ĕнтĕ поэт. Анчах пĕр сăмахпах икĕ ăнлава палăртма тăни, кашни ăнлавшăн *пĕртен-пĕр* кирлĕ сăмах тупайманни - шухăша пăтраштарать, сăвва хирĕçлевлĕ тăвать.

Тата акă мĕн. Сăввăн пĕтĕм тонĕ темле ватта юлнă хĕр мăкăртатса ÿкĕтленине аса илтерет. «Çавăнпа, тусăм, эс те мана эп юратнă пек ăшшăн юрат».

Ку - хушу, *тăн пару.* Хăй юратиччен малтанах хăйне тепри юратасса çав тери мăнаçлăн шанса тăракан, ăна-кăна курнă ăслă пуç çеç çапла калама пултарать. Кунта юратушăн - савнишĕн - çунни те, пăшăрханни те, ассăн сывласа тунсăхлани те çук. Кунашкал лирикăлла герой автортан чылай ватăрах та... кăнттамрах та. Юрату поэзийĕнче дидактика вырăнсар пулĕ тетпĕр эпир.

...Пуçланчĕ вара *кăтра çÿç проблеми!* И. Митяçăн «Кÿршĕ хĕрĕ» ятлă сăввинче çакна вулатпăр:

Çÿç кăтришĕн е хитришĕн
Юратманччĕ эп ăна:
Хĕрĕн çулăмлă чĕришĕн
Лекрĕм эпĕ тыткăна.

Куçĕсем сенкер те тарăн,
Пултаруллă хăй ĕçре.

Пĕр курсан, епле пултарăн
Юратмасăр çав хĕре?

Кунта йăлт тĕрĕс-тĕкел вара: савни ĕçре пултарать... Çапах... çапах та вăл сенкер те тарăн куçлă. Илем илемех ентĕ! Мĕншĕн-ха тата кăтра çӳçлĕ хĕр ĕçчен пулма пултараймасть?

Валентин Васильев та çав тезиспах «савнă тусăм куртăрччĕ тесе, кăтралатрăм сарă çӳçĕме» тет. Анчах кунта арçын кăтралатни палăрать. Малтан вăл çĕрĕпех купăспа çӳренĕ - савни юратман, çӳçне кăтралатнă - юратман, каччă хире тухса виçĕ норма тунă та - савнийĕ «чунăмран юрататăп» тенĕ. Шӳт пек ăнлансан, çырлахма пулать те-и, тен, ку сăвăпа. Анчах автор юрату проблемнне чăнласах çапла çăмăл татса парас тенĕ пулсан, ытла та ансат пулнă пулĕччĕ çынсен ăс-тăнне урăхлатса çĕнетесси. Шӳт тесен тата урăхларах форма - такмак (частушка) виçи кирлĕ пулнă пулĕ.

А. Клементьев именсе тăмасть вара. «Телей сана та, кăтра çӳçлĕ хĕрĕм!» тет. Чăн ĕнтĕ: *хĕрĕм* тесе хăвăнтан тăван хĕре çеç калама пулать. Кунта поэт хĕр-тусĕпе Шупашкар бульварĕ тăрăх гитара янăратса çӳрени çинчен çырать. Кайран хĕрĕ Мускав консерваторийĕнче «хĕрӳллĕ çамрăклăх çинчен» юрлать-мĕн. Ку та ĕçлĕ-хĕллĕ çынах. Ахаль кăна кăтра мар.

В. Тихоновăн «Юрату сăввисем» тесе кăларнă виçĕ япалинче те çавах. Савниййĕ Куйбышевра ĕçлет, хăй Шупашкарта, калăпăр. Савниййĕ «ĕçĕ чаплă - ытараймăн, килессе шанатăп» тет. (Хăйшĕн чĕрĕ çыншăн мар, - ĕçшĕн!) Ку «кулянмасăр-хумханмасăр», лăпкăн тавăрать. «Пыраймастăп, ан çилен, васкаса чул çурт тăватăп, хăпарап çӳлтен-çӳле», тет.

Е акă. Çăлтăрлă, шăпчăклă, сиреньлĕ, кĕмĕл уйăхлă, кӳлĕллĕ паркра савнипе савни шурăмпуç киличченех çӳреççĕ.

- Каласамччĕ, хăçан, - ыйтрĕ  каччă, -
Тĕл пулатпăр, савниçĕм, тепре? -
«Паянах, - хĕр кулса алă пачĕ, -
Паянах тĕл пулатпăр ĕçре».

Тепри. Çурхи Атăл, кĕсменсем тăкаççĕ кĕмĕл, шурă сăнлă Шупашкар, вара:.

Курăнать илемлĕ, капăр,
Эпир тунă çĕнĕ çурт...
Чаплă чулçă ятне панă
Пире, тусăм, ахаль мар.
Çĕнелсем эс, манăн савнă
Тĕп хуламăр Шупашкар.

«Манăн савнă тĕп хуламăр» тенине *пирĕн* тесе тӳрлетме те пултарнă-ха. Анчах... анчах мĕншĕн тăрăнтăмăр-ха эпир çак юрату лирикине? Мĕншĕн тесен авторсен чĕрĕ çын туйăмĕ анкета ыйтăвĕсен айне пулать. Пĕр анекдотла калаçу аса килет. Я. Ухсайăн Михайлов арăмĕ виçĕ ывăл çуратни çинчен сăвă пур. - А кам вара вăл Михайлов? - тесе ыйтнă имĕш пĕр ăслă пуç. Хăй шухăшланă ĕнтĕ, тен, вăл колхозник те мар, тен, кахал, тен, ун ĕçкунĕ çителĕксĕр, тен... тен... тем курса тăрăн!

Эпир ĕç поэзине хирĕç мар, анчах чĕрĕ шухăш-туйăма пĕр ĕç процесĕнчен *механически* кăкарса кăна хунине пĕтĕм чунтан хирĕç. Пирĕн саманара хамăр çĕршыври чĕрĕ çын сăнарне *тĕрĕс* кăтартас тесен, *ĕçĕн. поэзийĕ* хăех - çавăтса кĕмесĕрех - унăн юратăвне те пырса кĕрет. Виçине пĕлни кирлĕ: çутă хурлăх-и юратура, йăл култаракан

çăмăл тунсăх-и е чуна ыраттаракан тарăн драма-и. Пушкинăн çав туйăмсеме сăнласа панă виçĕ сăввине аса илтересшĕн эпир хамăр поэт-тавраша: «Сăрт-туллаă Грузире каçхи тĕтре выртать», «Ижора çывăхаруçăн», «Эс инçетри тăван çĕрӳшĕн».

Юрату темипе çырнă сăвăсенчен ăнăçлăраххи, пирĕн шутпа, Н. Александровăн «Сукмакĕ». Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен çав кĕскен, хĕр юрри пек çырнă сăвăра çĕршыври аслă ĕç те, çутçанталăка улăштарни те, икĕ савнин тунсăхĕ те, пĕрне-пĕри пачак хупламасăр, килĕшӳллĕн пĕрлешнĕ. Пĕр «фокуса» пухса кăтартма тăрăшнă вĕсене поэт. Юлашки икĕ йĕрки çеç, сăмах çаврăнăшĕ енчен, чăвашлах мар:

Каçсем çап-çутă, - пĕлейместĕп, -
Аçта чуптăвăпăр тепре!..

Çамрăк авторсем чылай ытти темăсемпе те, пĕр-пĕринпе ăмăртнă пекех, е, пирĕн журналсем заказ панă тейĕн, пĕр тезиспа çыраççĕ. ГЭС çинчен**,** *çутă çăлтăрсем* çинчен сăвă кĕртмесĕр «Ялавăн» сайра номерĕ иртет. Çăлтăр сăнарĕ - пĕлĕтри те, çĕрти те канăç памасть сăвăççене:

1. Çăлтăрсем тӳпере вăй выляççĕ.
   (Б. Тихонов).
2. Эпир çутнă çăлтăрсем мухтавлăн
   Илемлетрĕç пирĕн çĕршыва.
   (В. Васильев).
3. Мускав çăлтăрĕ çап-çутă
   Çутатать тĕнчипеле.
   (Ю. Скворцов.).
4. Çунать пин çăлтăр пин тĕлте.
   (М. Захаров).

5. Çут çăлтăрсем çунаççĕ тем чухлех.

(В. Алендей).

6. Çăлтăрсем куç хĕсеççĕ пире.

(Г. Лисин).

Пур çăлтăра шутласа та кăларас çук, шута илес тесен, ĕмĕрне çав ĕçпе ирттернĕ уйрăм çăлтăрçă кирлĕ. Ахаль мар халĕ, ĕлĕкрех çăлтăрсем çинчен çырнă поэта хурласа, çĕр çырли çинчен çырма хушакан Эсхель те çав çăлтăрсен тыткăннех лекнĕ:

Йăлтăр çутă çăлтăр куртăм
Атăл хумĕ çийĕнче...
Хумсем çийĕн йăлтăр-ялтăр
Пин-пин çăлтăр çуталсан...

Эпир çăлтăрсене сивлеместпĕр. Çӳлтисене те, çĕртисене те мухтав! Анчах вуланă сăвăсем пĕр пекки йăлăхтарать пире. Поэтсен чĕлхе лаççи чухăнни, сăтăрăлса, шупкалса пĕтнĕ сăмахсемех тĕл пулни кăмăла тавăрать: вулас килми пулать. Кун çинчен малалла татах та калăпăр. Халĕ, çапах та, çăлтăрсенех халалланă икĕ сăвва пăхса тухăпăр. Акă епле М. Захаровăн «Çĕнĕ ГЭС».

Халь пирĕн ялăн тĕлĕнче
Пур çĕнĕ ГЭС Сĕве çинче;
Нумай пулмасть - кăçал кăна -
Туса пĕтертĕмĕр ăна.
Яла та, фермăсем патне
Çитертĕмĕр ун хăватне..

Ямбĕ те ямбах, рифми те рифмах. Анчах ма рифмăламалла пулнă-ха çав прозăна? Çамка тирне хытарса асапланса лариччен хаçата телефонпа е телеграфпа пĕлтермелле пулнă-мĕн ун çинчен. Малалла автор пĕр тикĕссĕн пин çăлтăр пин тĕлте çунни çинчен, Сĕве пӳртрен пӳрте кĕрсе çап-çута çăлтăрсем (каллех çăлтăр!) çутни çинчен çырать. - Тем те пулать иккен, тусан! - тет. Йăлт тĕрĕс. Поэтăн *хăйĕн* сăнлăхĕсем, *хăйĕн* сасси кăна çук.

Çав темăпах Г. Лисин унран чылай кĕске «Çĕр çинчи çăлтăрсем» ятлă сăвă çырнă. Пирĕн шутпа çав сăвăра шăпах та поэтăн хăйĕн пулас тĕрри-эрешĕ палăрнă вырăнсем пур.

Çăлтăрсем куç хĕсеççĕ пире:
Кăтартасшăн хăйсен илемне.
Çĕр çинчи çăлтăрсем хитререх, -
Хамăр çутнă эпир вĕсене.
Ешĕл çулçă çинче ирĕлсе,
Йĕпхӳ пек тăкăнать сар шевле,
Хĕвелçаврăнăшсем тĕлĕнсе
Çаврăнаççĕ халь ГЭС еннелле.

Хĕвелçаврăнăш пуçĕсем каçхи çутăсем еннелле çаврăннине çаврăнманнине ботаниксем калĕç. Кунта пире поэт куллен-кунхи япаласенех эпир курман енчен кăтартасшăн пулни, *хăйĕн* «фокусне» шырани интереслепте-рет. Поэзин чи паха енĕ - пурте курса тăракан япаланах йăлт урăх çутăпа çутатса кăтартни, - çапла ăна лайăхрах тавçăрса илме, тарăнрах ăнланма пулăшни пулса тăрать.

Пирĕн сăвăçсен тата темĕнле хăйне евĕрлĕ максимализм пур. Кунта эпир юри пысăклатнă сăнлăхсем (гиперболăсем) çинчен каламастпăр. Çук, вĕсем пĕр япаланах пĕр-пĕринчен ăмăртмалла ӳстерсе сăнланăн туйăнать.

1. Шултăра пучахсем шăп пĕр шит.

(Кăсăя Васлейĕ).

2. Шитрен те вăрăм пучахсем

Туллин лараççĕ сĕрĕшсе.

(Н. Мартынов).

3. Ыраш пучахĕ икĕ шит таран.

Ăна туни епле чăтса ларать?!

(Г. Ефимов).

Халлĕхе, чăнах та, çур аршăн тăршшĕ пучаха чăтмалли хăмăл курăнмасть-ха пирĕн уйсенче.

Çын сăнарĕсене илсен те - орденлă та ылттăн çăлтарлă герой-паттăр сайра сăвва кĕрсе вырнаçман пулĕ. А. Ивановăн «Гвардеец» ятлă саввинче çакăн пек йĕркесем пур:

Ун аманнă кăкăрĕ çинче

Ик орден, ылттăн çăлтăр ялкăшать, -

Фронтри герой колхоз уй-хирĕнче

Герой ятне илмешкĕн тăрăшать.

Çавăншăн çеç тăрăшать-ши вара? Мухтамалла-ши хăй чапĕшĕн кăна çумакан çынна? Сăпайлăн ĕçлекен кăмăллăрах мар-ши пире?

Тăван чĕлхен мĕнпур хăвачĕпе усă курма та веренеймен-ха эпир. Кунта, ватти-яшшине уйăрмасăрах, çакна каламалла. Тӳсме çук чухăн, пĕр пек сăмах çаврăнăшĕсем пуçа минретсе çитереççĕ! Н. И. Ашмаринăн **Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче** хĕрĕх пин сăмах ытла; пирĕн чылай авторсем çав пуянлăхăн вуннăмĕш шайне те *хăйсен туса* йышăнайман-ха. Ку - поэзире те, прозăра та, драматургире те çавах. Паллах, илемлĕ çырулăх ăсти тиек мар: вăл сăмахсене, тути-масине пĕлмесĕр, çырса илнипе пысăк ĕçех тăваймĕ. Чĕлхен шалти саккунĕсене тĕпчесе, хамăрпа пĕр çемьеллĕ ытти чĕлхесем мĕнле улшăнса пынине сăнасан

çеç пуплеве хăюллăн авкалама, тепĕр чух «кивĕ» сăмахах *чĕртсе* çĕнĕ ăнлава пĕлтерекен тума пулать. Ку тĕлĕшрен писательсене чĕлхеçĕсемпе пĕрлешсе ĕçлени питĕ пулăшнă пулĕччĕ.

Эпир пăхса тухнă сăвăсенче тăтăшах çавнашкал «хитрелĕхсем» тĕл пулаççĕ:

1. Молдави сачĕсен тĕлне çитесчĕ.
2. Умрах Куйбыщев - садсен хули.
3. Çĕнĕ садсем чечекленсе çĕкленчĕç.
4. Сад-вăрмансем лартма, канал тума.
5. Сад-вăрмансем ак симĕс çулçă сарчĕç.
6. Эпир садсем чĕртме хунав ӳстернĕ чух,
7. Садсем ӳсмен вĕри пушхирсенче те
   Кавказри пек хитре садсем чĕртме.
8. Вăрмансемпе хитре садсем чĕртетпĕр.
   Тăван çĕршыв çурхи сад пек ешертĕр.
9. Садсем шур чечекре, тӳпе сенкер.
10. Садсем чĕртме вĕри Туркменире,
   Туркмени хирĕ садсемпе ешерĕ.

Кусем - А. Клементьев сачĕсем. Кунта пурте мар-ха. Тăвата сăвăра кăна çакăн чухлĕ сад кашласа ларать. Вĕсене те йăлтах асăнаймарăмăр. Ытлашши сулхăн, ешĕл, чечеклĕ мар-ши? Автор тата çак сăмахсемпе те пулин урăхлатса тĕрлĕлетмест хăйĕн йывăççисене. Кичем ун тĕссĕр сачĕсем.

Акă тепĕр йышши «хитрелĕх».

Б. Тихоновăн «Кĕсменсем тăкаççĕ кĕмĕл» тенине асăнсаттăмăр. Ку халлĕхе çĕнĕлле илтĕнет-ха. Çяв сăвăпа юнашарах «ярăнать кĕмĕл уйăх мăнаçлăн» тени вара никама та тĕлĕнтермест. Вăл çеç-и?

1. Шăнкăр-шăнкăр кĕмĕл саслăн

Шăранать пике юрри.

(Н. Мартынов).

2. Туратсем çинче юрлаççĕ

Кĕмĕл саслă кайăксем.

(Кăсăя Васлейĕ).

3. Çутăлать тĕкĕр пек çĕнĕ кӳлĕ,

**Кĕмĕл** тĕслĕн çиççе ялтăрать.

(М. Волкова).

4. Вăштăр-вăштăр çилпе хумхануллăн (?!)

**Кĕмĕл** сывлăм шывне салатса.

(М. Львов).

5. **Кĕмĕлленеç** шыв-шурĕсем.

(И. Малкай).

6. Кĕмĕл тĕслĕ кӳллисем

Йăпатаççĕ чунăма...

6. **Кĕмĕл** тĕслĕ кӳллисем

Шурă акăш ярăнать...

**Кĕмĕл** уйăх çутинче

Ялкăшаççĕ орденсем...

(В. Алагер).

Юлашки автор çутçанталăк çине таçтан айккинчен пăхса киленекен çав йышлă сăвăç-терĕше чечек пуçкăшăлĕ тăхăнтарсах пехилленĕ пек туйăнать.

- Юрĕ-çке ку! - тейĕç. Апла пулĕ те, çапах ку вунтăххăрмĕш ĕмĕрти «улпут йăвисенче» пусса кăларнă романс таврашне çеç аса илтерет. Тӳлек, чечен, лăпкă! Юлашкинчен, тем калĕç тенĕ пек, сых ячĕшĕн орден çакса янă кĕмĕл уйăх нимĕне те улăштармасть кунта: тĕп меслечĕ урăх

кирлӗ пулнӑ. (Эпир халӑх юррисенчи параллелизмпа пӗлсе усӑ курмалли ҫинчен тепӗр статьяра астутарнӑччӗ.)

*Юрӑ* тенӗрен, ҫакна каласа хӑварас килет. Пирӗн композиторсем вӑл тӗлӗшрен ытла та тиркевсӗр! Вӗсемшӗн пулсан, кӗввине тӑсмалӑх сӑмах пултӑр. Г. Хирбю валли Кӑсӑя Ваҫлейӗ ҫырнӑ «Ешӗл сад» сӑвӑра (каллех сад!) эпир акӑ мӗн вулатпӑр:

Епле капӑр улма сачӗ
Ҫырла пиҫнӗ вӑхӑтра.

Улма пулсан - улма, ҫырла пулсан - ҫырла пултӑрччӗ ӗнтӗ. Пирӗн ирӗксӗрех пӗр сӑвӑҫӑн анекдота тухнӑ икӗ йӗркине аса илме тивет:

Аллла тытрӑм балалайка
Сӗрмекупӑс калама.

Пӗтӗмӗшпе илсен те, юрӑ сӑмахӗсем ҫав авторӑн ытти сӑввисенчен нумай кайра тӑраҫҫӗ.

Кӑсӑя Ваҫлейӗ чылайранпа ҫырать. «Ялавра» тухнӑ «Тӑван уй-хир» ятлӑ страници, «Капкӑн» кӗтессинче курӑнкаланӑ хӑшпӗр тӗллӗ-витӗмлӗ япалисем тата ыттисем те ҫав сӑвӑҫ ӗҫлеме пултарниие шантараҫҫӗ. Унӑн сӑввисем яланах сюжетлӑ. Ял пурнӑҫне вӑл - ӗлӗкхине те, хальхине те - лайӑх пӗлнӗ пек туйӑнать; халӑх шухӑш-кӑмӑлне чухлакан ҫын пек туйӑнать. Пире ун «Юмах мар ку, чӑн сӑмах» тенӗ сӑвви уйрӑмах килӗшнӗччӗ. Ӗлӗкхи ял хресченӗ, кӗреҫе йӑтса, анине хусӑклама кайнӑ. Сӑхманне сарса канма ларнӑ. Ӗҫе тытӑнма тесе тӑнӑ та - ани ҫук-мӗн. Йӑнӑш килтӗм пулӗ, тесе сӑхманне илсе хул айне хӗстернӗ те - анине курах кайнӑ.

Пĕчĕк ана, хыт ана
Саплăк пысăкăш кăна,
Астумасăр сăхманпа
Витнĕ хунă-мĕн ăна.

Çак халăх сăмахĕнчен автор шухăша яракан тарăн пĕтĕçтерӳ туса хурать:

Юмах мар ку, чăн сăмах,
Пулса иртнĕ тахçанах.
Кулăшла пек халь пире,
Пирĕн аслă уй-хире
Талккăш пĕлĕт сарса тух -
Пурпĕрех хуплаяс çук.

Тен, çавнашкал халăхра çӳрекен, халăхамăрăн вичкĕн ăс-хакăлне палăртакан халап-юмах евĕрлĕ япаласене тата ытларах тинкермелле пулĕ поэтăн. Халăха хăй каланинех, тепĕр чух кĕскен - пĕр-ик сăмахпа систернине илемлетсе, çивĕчлетсе, пуянлатса тавăрса пани - пархатарлă ĕç. Кашни пысăк художникăнах ĕмĕт тӳпи çавă.

Авторăн васкани, сăмаха вырăнсăр лартни, чĕлхи чухăнраххи пур сăввисенче те палăрать-ха. Яла хулапа танлаштарни, К. В. Иваиов хыççăн, вулакана нимĕнпех те тĕлĕнтермест. Комбайна вуншар поэт *карап, хир кара-пĕ* тенĕ. «Чечек пек хĕрсем», «янкăс кĕвĕ», «савăк кăмăл», «иксĕлми телей» тата ытти çавнашкал *пурин* сăмахĕсем те çаплипех кĕреççĕ-ха сăвăçăн йĕркисене.

Ак çак йĕркесем вара чăнах та *хйййĕн -* Кăсăя Ваçлейĕн теес килет:

Çивчĕ пуртă айĕнчен

Вăркăнать турпас хивре...
Шывпа çунă пек таса
Çуталаççĕ стенисем...
Аслă, тӳрĕ урамра
Пăрахут пек çĕн çуртсем.
(«Платниксем»).

Кунта ĕç поэзийĕ те, куллен-кунлăха поэт куçĕпе сăнани те, тĕрĕс сăнлăхсем те пур.

Пĕр сăмахпа икĕ ăнлава палăртса, вĕсене юнашар лартассинчен те хăтăлмалла пулĕ пирĕн.

Çитнĕ те çитес çĕре,
Сăхманне сарса, çĕре
Ларнă...

Омонимсене рифмăлани - поэтăн пуянлăхĕ мар, чухăнлăхĕ. «Утнăçемĕн утма тараватъ» - чăвашла мар.

Пĕчĕк сăвăпа пысăк шухăш калас тĕлĕшрен тепĕр япалана пăхса тухăпăр. Кăсăя Ваçлейĕн «...чăн сăмахĕпе» пĕрлех Н. Мартыновăн «Пучах» ятлă сăвви пичетленнĕ. Мĕнре çав сăввăн шухăшĕ-тĕшĕ? Ăçта çырнă-и ăна? Мĕнпе вăл пирĕн кăмăла тултараймарĕ?

Хаваслă уçă кăмăлпа
Хирте ĕçлетпĕр ушкăнпа.
Умра сар тулă хумханать,
Чăн тинĕс евĕр курăнать...

Кунта çĕнни нимĕн те çук. Сар тулă тинĕсĕ, хаваслă, ушкăнлă ĕç; малалли хайхи шитрен те вăрăм пучахсем, пăрçа пек шултра сап-сарă (каллех!) ылттăн пĕрчĕсем - Мартыновчченех каланнă, çырăннă. «Хир тыткăна илет куçа» тени те - вырăсла шухăшласа *пленяет взор* сăмахсене куçарни çеç пулать. Чăвашсем урăхларах, сăмахран, куçа илĕртет, куç тулли, куçа илеймĕн теççĕ, поэтăн çавăн пек каламалла та.

Кашни пучах алла кĕрет,
Пĕр пĕрчĕ тăкăнмасть çĕре,

тет малалла автор. Чи малтан - ку тĕрĕс мар: пĕр пĕрчĕ мар, пин пĕрчĕ те, ытларах та тăкăнать. Унтан - ку хайхи эпир асăннă максимализма кĕрекен якалăх, тикĕслĕх. - Тырпула тăккаламасăр пуçтарар! - тесе çырма пăрахман-çке-ха пирĕн хаçатсем. Кунта «ах, ан тăкăнтăрччĕ», «тăкас марччĕ» тенĕ шухăшпа пăшăрханни вырăнларах пулнă пулĕччĕ, çынна ытларах ӳкĕте кĕр-тĕччĕ, мĕншĕн тесен поэт çав *пучаха* йăлтах урăхла кăтартса вĕçлет хăйĕн сăввине:

Аçтан ӳкерĕн пучаха?
Вăл ӳснĕ пирĕн ырлăха.
Эпир хисеп туса ăна
Çĕкленĕ чаплă вырăна.
Вăл пур ĕçхалăх умĕнче -
Çĕршывăн гербĕ çийĕнче.

Çакăнта ĕнтĕ сăввăн пахалăхĕ, шухăш варри, тĕшши. Çакăн пек пĕтĕçтерӳсем тума пĕлсех каймаççĕ çав-ха пирĕн сăвăçсем. Анчах пучах çĕршывăн гербĕ çийĕнче мар, вăл хăй çав гербăн уйрăлми пайĕ.

Тарӑн шухӑша калама тӗрӗс сӑмах майлашӑвӗ кирлӗ. Эпир пулса ҫитнӗ, илемлӗ, ҫирӗп формӑшӑн кӗрешетпӗр. Форма вӑл ытахальтен ҫакса янӑ юсав кӑна мар. Вӑл произведенин тӗп шухӑшне ӑнланса илме пулӑшать, ӑна уҫӑмлӑ тӑвать, вӑйлӑлатать. Содержанийӗ пулсан, форми тупӑнать, тенисем -кахаллӑхпа мӗскӗнлӗхе тӳрре кӑларасшӑн е литература ӗҫне юри сӑтӑр тӑвасшӑн павранӑ сӑмахсем ҫеҫ. Сӑра мӗнле кӑпӑклӑ-хӑймаллӑ пулсан та, ӑна яшка тирӗкӗпе ӗҫме кӑмӑллах пулмӗ. Унӑн хӑйӗн курки пур.

А. А. Серафимович патне ҫырнӑ уҫӑ ҫырӑвӗнче А. М. Горький ҫапла каланӑ:

«Сӑмахлӑ пултарулӑхра чӗлхене ҫителӗклӗ пӗлменни яланах культура сахаллине кӑтартать, тата вӑл яланах идеологи тӗлӗшӗнчен сахал вӗреннине палӑртать, - ҫакна ӑнланма вӑхӑт ӗнтӗ!

Литературӑна сӑмах ҫӳп-ҫапӗнчен тасатма, хамӑр чӗлхене уҫӑмлӑ та ӑнланмалла тума никама хӗрхенсе тӑмасӑр кӗрешмелле; тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе тунӑ техникӑшӑн (илемлӗ ҫырулӑх техникишӗн - П. Х.) кӗрешмелле, унсӑрӑн уҫӑмлӑ идеологи пулма пултараймасть». **(М. Горький,** 27-мӗш том, 151 - 152 страницӑсем.)

Ҫак сӑмахсем пирӗн кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗртенех армак-чармак хӑлаҫланса хут сая яракан ӑслӑ пуҫсене тӳрех пырса тивеҫҫӗ.

Чӑваш поэзийӗн культури пӗчӗкҫӗ мар. Федоровпа Иванов хыҫҫӑн, Ҫеҫпӗлпе Элкер хыҫҫӑн эпир вайӑн-шайӑн ӗҫлеме пултараймастпӑр. Ун пек тивӗҫ никамӑн та ҫук: ваттин те, ятлин те, ятсӑррин те.

Виҫӗ ҫамрӑк поэтӑн кӗнекисене эпир юриех асӑнмасӑр хӑвартӑмӑр. В. Алендей ҫинчен ҫырнӑ В. Долгов статьипе, пӗтӗмӗшпе илсен, килӗшмеллех пулать пирӗн. Г. Ефимовпа М. Хури пирки А. Алгапа Н. Евстафьев чылаях ҫителӗклӗ, тӗпчевлӗ, тишкӗрӳллӗ шухӑшсем каланӑччӗ.

Пур ҫыра-тӑранах асӑнма май та ҫук, кирлӗ те мар пулӗ тетпӗр.

В. В. Маяковский поэзие чи йывăр ĕç тенĕ. Çав йывăр ĕçе пуçăнса, сăмах тутине пĕлнĕ е тин активнĕ çынсен ячĕсемех çак пĕчĕк статьяра шăнăçаяс çук. Халăх культури хăпарнăçемĕн, ӳснĕçемĕн талантсем тан шывĕ пек тапса тухаççĕ.

Эпир кунта çамрăксен пултарулăхĕнчи типлăрах япаласене илсе кăтартма тăрăшрăмăр. «Ырланинчен» «хурлани» ытларах пулчĕ пулсан, вăл çамрăксен шанчăкне пĕрре те шăнтса лартмалла мар.

Хăйне критикленине *юрататакан* çынна курман-ха эпир: критика вăл савни мар. Критикăна *ăнланакансем* поэтсем хушшинче те тупăнкалаççĕ. Çамрăксенчен ун пеккисем йышлăрах, теççĕ. Çавсем çинче ĕнтĕ пирĕн шанчăк. Пысăк шанчăк!

1954 ç.